«Педагогсемпе наставниксем – Муркаш çĕрĕн мухтавĕ»

# «Ачасем компьютерпа туслишĕн савăнатăп»

Ялти учителĕн пĕлтерĕшĕ пысăк. Хăвăрт улшăнакан пурнăçра вăл туса ирттерекен ĕçе пĕр енлĕ хаклама çук. Унăн ĕçне ялсен малашлăхĕпе, çамрăк ăрăвăн пуласлăхĕпе çыхăнтарни тĕрĕсрех. Мĕншĕн тесен паян шкулта ăс пухакансем çĕнĕ технологисем вăй илсе пыракан пурнăçра ĕçлесе пурăнма хатĕрленеççĕ. Çавăнпа та ял малашлăхне шанакан учителĕн хăйĕн ĕçĕнче йăнăшма ирĕк çук. Ахальлĕн кашни пĕчĕк кăлтăк вуншар ача вĕренĕвĕпе пысăк калăпăша пухăнма пултарать. Ун хыçĕнче вара тăван ялпа хамăр юратнă округ малашлăхĕ, пурне те пĕтĕçтерекен республика тата Раççей аталанăвĕ тăрать. Çавăнпа та таса чунлă, ырă шанчăклă, çутă ĕмĕтлĕ, нумай пĕлме тăрăшакан ачасене çителĕклĕ те тарăн пĕлӳ илсе пурнăç çулĕпе çирĕппĕн утма вĕрентесси – 21 ĕмĕрти вĕрентекенĕн тĕп тĕллевĕ. Çакăн пек пĕтĕмĕшле хурав пачĕ 30 çул Муркашри вăтам шкулта ĕçлекен Олег Волков **(сăн ӳкерчĕкре)** учителĕн паянхи обществăри вырăнĕ пирки сăмах хускатсан. Чей ĕçсе ларнă хушăри туслă калаçу вара пирĕн вăрăма тăсăлчĕ. Атте-аннесен пурнăçне, вĕрентекенсен çăмăл мар ĕçне, шкул ачисен тĕллевĕсене сӳтсе яврăмăр.



**Атте нумай пĕлетчĕ**

Муниципалитет округĕнчи шкулсенче ачасене информатика предметне вĕрентекенсен пĕрлешĕвĕн ертӳçи, аслă категориллĕ учитель Олег Константинович хамăр калаçăва ашшĕ-амăшĕнчен пуçларĕ.

– Пурнăçра пурте космонавт е Президент пулаймаççĕ. Анчах кашни çыннăн хăйĕн пурнăç тилхепине тытма пĕлмелле, харпăр хăйĕн ĕçĕпе ыттисемшĕн тĕслĕх пулмалла. Манăн аттепе анне – Константин Филипповичпа Римма Федоровна – çавăн пеккисен йышĕнченччĕ. Аслă пĕлӳллĕ специалистсем пулман пулсан та, çулсем иртнĕ май эпĕ вĕсене çамрăк ăрăвăн чăн-чăн наставникĕсем тесе хаклатăп. Вĕсем пире хăйсен тĕслĕхĕпе туслă пурăнма вĕрентнĕ, тивĕçлĕ пĕлӳ илме пулăшнă, канаш пама пĕлнĕ, кирлĕ сĕнĕве те вăхăтра панă. Çур ĕмĕр ытла пурнăçăмра çаксем йăлтах вырăнлă пулнине халĕ хам куçпа куратăп. Атте ĕмĕрĕпех Муркашри «Сельхозтехника» пĕрлешӳ водителĕнче ĕçлерĕ. «25 лет без аварии» медаль илни те вăл мĕнле ĕçленине палăртать пулĕ. Хăйĕнчен çамрăк водительсене вăл пĕр турткаланмасăр пулăшни, çемьешĕн ялан çирĕп тĕкĕ пулни тата ялан нумай пĕлме тăрăшни паян та куç умĕнче. Унăн кирек епле ĕç пирки те, техника юсассипе те усăллă сĕнӳ çителĕклĕччĕ. Вăл нумай пĕлнинчен эпир тĕлĕнеттĕмĕр, ун пек пулма ĕмĕтленеттĕмĕр. Анне те Муркаш райповĕн сутуçинче ĕçленĕ май чылай çынна паллатчĕ, вĕсем пирки пире ыррине кăна каласа паратчĕ. Çапла вара нумай пĕлме тăрăшасси, ыттисене пулăшасси, çынна ырă çеç сунасси пирĕн ăшра ачаллах йăва çаврĕçĕ. Марина йăмăкăмпа иксĕмĕр çакăн пек туслă çемьере çитĕннине паян Турă пулăшăвĕ тесе хаклатăп, – пуçларĕ хамăр калаçăва манăн пĕлĕшĕм.

Вăхăт хăйĕн уттипе пырать. Çапла вара çул çитсен Олег Муркашри вăтам шкулта пĕлӳ пухма пуçлать. Класра ачасем нумайччĕ, пуçлăхсен çемйинчисем те пурччĕ. Анчах арçын ача хăйне ыттисенчен катăк тытмарĕ. Пĕрремĕш класранах пĕлӳ çулĕпе çирĕппĕн утрĕ. Çапах ытти предметсенчен математикăпа физикăна тата вырăс чĕлхипе литературине, чăваш чĕлхипе литературине тĕплĕнрех вĕренме тăрăшрĕ. «Пурнăçра хăвăн çулна тупас тесен тăрăшса вĕренмелле, учительсене итлемелле, вĕсем каланине вăхăтра пурнăçламалла», – тенĕччĕ ăна пĕрремĕш класа ăсатнă чух ашшĕ. Çак сăмахсем уншăн шкулти ăнăçлă вĕренĕвĕн уççи пулчĕç. Ашшĕ-амăшĕн сăмахĕнчен иртмен арçын ача кашни урока тĕплĕ хатĕрленсе каятчĕ, библиотекăпа туслă çыхăну тытатчĕ, аслă юлташĕсен ăнăçу никĕсне те тишкерсех пыратчĕ. Çакă ăна вĕренӳре туллин ĕлкĕрсе пыма пулăшрĕ.

**Компьютер**

Çул хыççăн çул историе çырăннă май пурнăç улшăнсах пырать. Кунпа пĕрлех çамрăк ăрăвăн аталанăвĕ те пĕр вырăнта тăмасть. Тĕслĕх вырăнне Олег Константинович компьютер пирки сăмах хускатрĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче шкулта компьютер сăмах та пулман. Вăл мĕнлереххине тата унпа епле ĕçлемеллине шкул ачисем пĕлме те пултарайман. «Юмахчĕ ун чухне вăл пирĕншĕн. Тепĕр 10 – 15 çултан çак ăслă техника пире тыткăнлассине те никам ĕненмен. Анчах пурнăçри чăнлăх урăхла килсе тухрĕ», – калаçрĕ вĕрентекен.

– Пурнăç çапла улшăнасса ĕненмен пулсан та вăтам шкул хыççăн Чăваш патшалăх университечĕн физикăпа математика факультетĕнче ăс пухма епле шутларăн? Такам каланипе суйларăн-и çак çула? – кăсăкланатăп педагогран.

– Шкул хыççăнах хама ĕçре тĕрĕслерĕм. Кайран вара хатĕрленӳ курсĕ урлă асăннă вĕренӳ заведенийĕн физмат факультетне вĕренме кĕтĕм. Компьютер мана çакăнта хăваласа çитрĕ. Факультетăн юлашки курсĕсенче пире компьютерпа паллаштаракан занятисем пулчĕç. Мана ку çĕнĕлĕх килĕшрĕ, интереслентерчĕ. Пĕрешкел шутлакан студентсемпе хушма занятисене çӳрерĕмĕр. Шалти туйăм ун чухнех ку çĕнĕлĕх малашлăхпа çыхăннине систеретчĕ, йăнăшмарăм, – пулчĕ хурав.

1993 çулта аслă пĕлӳ илнĕ вĕрентекен Муркаша, тăван шкула, таврăнать. Ăна математика, экономика тата информатика учителĕ пулса ĕçлеме йышăнаççĕ. Шăпах çав çулсенче вĕренӳ заведенийĕсенче те, ĕç коллективĕсенче те компьютер технологийĕ аталанма пуçларĕ. Университетра чухнех компьютер еннелле утăмланă учитель çĕнĕлĕхе килĕштерсе йышăнать, программăсен чĕлхипе кăсăкланма пуçлать. Çав çулсенчех шкула робототехника вĕрентĕвĕ çитет. Ку çĕнĕлĕх те Олег Константиновича айккинче хăвармасть. Компьютер технологийĕнче малашлăх пуррине ăнланса çамрăк педагог Чăваш Республикин Вĕренӳ институтĕнче компьютер программисемпе ĕçлеме квалификаци ӳстермелли курса çырăнать. Çакăн хыççăн вăл Муркашри вăтам шкулта вĕренекенсене информатика предмечĕпе ăс пама пуçлать.

**Конкурс çĕнтерӳçисем**

Шкул ачисем те пурнăç кăларса тăратнă çĕнĕлĕхпе туллин кăсăкланма пуçлаççĕ. Çав çулсенче районта информатика предмечĕпе малтанхи конкурссем ирттерсен çĕнтерӳçисем... иртеççĕ. Çамрăк вĕрентекенĕн воспитанникĕсем те унта хутшăнса лайăх кăтартусем тăваççĕ. Çак вăхăтрах асăннă конкурссем (каярах вăхăтра – олимпиадăсем) ремпубликăра та вăй илеççĕ. Ку çĕнĕлĕх пуçаруллă учителе хăйĕн предмечĕпе тĕллевлĕрех ĕçлеме хистет. Çитменнине 1998 çулта унăн вĕренекенĕ информатикăпа республика конкурсне хутшăнма право çĕнсе илет. Унта вăл япăх мар кăтарту туни учителе татах тĕкĕ парать. Çакăн хыççăн Муркашри вăтам шкулта компьютерпа ĕçлеме вĕрентесси хушма вăй илет.

Чĕрĕк ĕмĕр хушшинче Олег Константинович алли витĕр вуншар ача тухать. Вĕсем хушшинче 30 ача ытла республикăри олимпиадăсене хутшăнса çĕнтерӳçĕ е призер пулса тăнă.

– Ачасем олимпиадăсене хутшăнни лайăх-ха, анчах вĕсем хăйсен пурнăç çулне компьютер технологийĕсемпе çыхăнтарни мана ытларах савăнтарать. Манăн вĕренекенсем ку енĕпе аслă пĕлӳ илсе паян Раççейри тĕрлĕ хулара ĕçлеççĕ. Мускавра çеç пирĕн шкултан вĕренсе тухнă 20 ытла яшпа хĕр вăй хураççĕ. Вĕсемсĕр пуçне пирĕн выпускниксене Шупашкарти, Хусанти, Чул хулари, Санкт-Петербургри предприятисемпе организацисенче те курма пулать. Яла килсен вĕсем шкула кĕрсе тухни вара – маншăн чăн-чăн савăнăç, – паллаштарчĕ паянхи пурнăçпа информатика предмечĕ вĕрентекенсен округри пĕрлешĕвĕн ертӳçи. Ачасем информатика предметне юратнине вĕсем юлашки çулсенче унпа ЕГЭ суйласа илни те çирĕплетет. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче çеç 11 «б» класра вĕренекенсем пурте майлах çак предметпа ЕГЭ тытнă. Тĕрĕслев витĕр ăнăçлă тухнисем пурте аслă вĕренӳ учрежденийĕсене бюджет вырăнĕсене вĕренме кĕнĕ.

Олег Константинович çемьеллĕ. Унăн мăшăрĕ Лина Алексеевна Муркашри вăтам шкулта вырăс чĕлхипе литератури вĕрентет. Вĕсен икĕ хĕрĕ – Владăпа Виктория – ашшĕн çулĕпе кайса пурнăçра информатика технологийĕсене суйласа илнĕ. Иккĕшĕ те паян Чăваш патшалăх университетĕнче ăс пухаççĕ.

# Яланах ыттисемшĕн тĕслĕхре



Ялта пурăнаканăн, кирек ăçта ĕçлесен те, тĕп шухăшĕ килти хушма хуçалăх çинчех. Ылтăн кĕркунне çитнĕ май вăл паян çăвĕпе пахчара туса илнĕ çимĕçе вăхăтра тирпейлĕ пуçтарса кĕртесси, ăна тупăшлă вырнаçтарасси, пуян тухăçпа тĕллевлĕ усă курасси пирки шухăшлать.

Эсир паянхи сăн ӳкерчĕкре пурнăçра хăйĕн вырăнне тупнă, тӳрĕ кăмăллă, ĕçĕпе ял çыннисем хушшинче ырă ят çĕнсе илнĕ вĕрентекене тата ăшпиллĕ наставника, нумай ача амăшне, тăван округ ятне çӳле çĕклекене, республикăра ырăпа палăракан ĕçчене Надежда Ивановăна куратăр. Вăл 1962 çулта Апчар ялĕнче нумай ачаллă хресчен çемйинче çуралнă.

Çулсем иртнĕçемĕн хăш-пĕр çын час-часах сывлăх хавшани, чир-чĕр канăçсăрлантарни пирки сăмахлать пулсан, Тренккăра пурăнакан Надежда Лукинична вĕсен йышĕнчен мар. Пуян опытлă педагог пĕр ялта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе пурăнаканпа та, уй-хирте тырă-пулă ӳстерекенпе те, трактор-машинăпа ĕçлекен механизатор-водительпе те, шкул хапхинчен вуншар çул маларах вĕренсе тухса пурнăçра пысăк ӳсĕм тунисемпе те, иртнĕ çул çеç шкул пĕтернĕ хыççăн институт-университета вĕренме кĕнĕ студентпа та, паян парта хушшинче ăс пухаканпа та пĕр чĕлхе тупса калаçма пултарать. «Манăн пурнăç шкулĕ çапла пулчĕ. Эпĕ яланах халăхпа пĕрле. Кунта вара пĕрне тиркесе теприне килĕштернине юратмаççĕ – кашнинпех пĕр чĕлхе тупма пĕлмелле», – терĕ вăл хăйне ырă енчен палăртса сăмах хушнинчен аванмарланса.

Авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа аслăраххисем те, шкул ачисем те Ильинкăри вăтам шкулта ăна ăшшăн тав туса чĕрĕ чечек çыххисем панине курма питĕ кăмăллă пулчĕ. Эпĕ ăна пĕрремĕш кун мар палланăран тата унăн учитель тата директор ĕçне çывăх курса тăнăран çак савăнăçлă самант ман çумран йĕр хăвармасăр иртмерĕ...

**Яла суйланă**

Тăвата ачаллă çемьере Надя кĕçĕнни пулнă. Ашшĕ пурнăçран ир уйрăлнăран ачисене ура çине тăратасси, пурнăç çулĕ çине кăларасси пĕтĕмпех амăшĕн хулпуççийĕ çине тиеннĕ. Ял çыннисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăман хĕрарăмăн пĕтĕм шанчăкĕ ачисем çинче пулнă. Çавăнпа амăшĕ вĕсене ачаллах ĕçпе туслаштарнă, унăн вăрттăнлăхĕсене вĕрентнĕ. Çапла вара Надьăн та аслисен çурăмĕ хыçĕнче пытанса ӳсме май килмен: ачаллах алла кĕрепле, сенĕк, кĕреçе, ӳсерехпе çава тытма тата кил хуçалăхри выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕке пăхма тивнĕ. Аслăраххисенчен юлмасăр вырмара ĕçлени те, çамрăклах тулли михĕсем йăтни те уншăн паян суя сăмах мар.

Ачалăха тишкернĕ май, çулсенчи хĕрарăмăн пĕчĕккĕ чухне урамри тантăшĕсемпе шкулла выляни нихăçан та манăçмасть. Инçетри çав çулсенче вăл яланах никам сĕнмесĕр учитель рольне хăй çине илетчĕ: тантăшĕсене çырма-вулама, шутлама, сăвă пăхмасăр калама, учитель каланине итлеме вĕрентетчĕ. Çак суйлавра ялти шкул ачисене вĕрентме килнĕ тата кӳршĕре хваттерте пурăнакан Шуршăл хĕрарăмĕпе хутшăннин витĕмĕ те пулнах-тăр.

...Кун хыççăн кун иртет, çул хыççăн çул. Пурнăçăн çак йĕркипе пырса хĕр ача сисмесĕрех шкул çулне çитет, Апчарти пуçламăш шкулта ăнăçлă вĕреннĕ хĕрне амăшĕ 3 çултан Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкула вĕренме ярать. Пуçаруллă пулма хăнăхнăскер, çĕнĕ коллективра та часах хăйĕн вырăнне тупать вăл, пĕрле вĕренекенсем хушшинчи лидер пулса тăрать.

(Вĕçĕ 5-мĕш стр.)

**«Педагогсемпе наставниксем – Муркаш çĕрĕн мухтавĕ»**

# Яланах ыттисемшĕн тĕслĕхре

(Вĕçĕ. Пуçл. 4-мĕш стр.)

«Атте пулманран çимелли-тăхăнмалли те питех марччĕ манăн. Ку çитменлĕхе эпĕ тăрăшса вĕреннипе саплаштарма шутларăм. Хамран каярах юлса вĕренекенсене пулăшасси те маншăн ялан тĕп вырăнтаччĕ. Çапла вара лайăх паллăсемпе вĕренсе вунпĕрмĕш класа çитрĕм. Экзаменсене ăнăçлă тытса алла аттестат илтĕм», – аса илчĕ шкул çулĕсене Надежда Лукинична. Малалла вĕренес ĕмĕчĕ те пысăк пулнă. Анчах çемьере укçа-тенкĕрен кăртăнкă пулнăран 17 çулхи хĕр малтанах ĕç çулне суйласа илет: пĕр çул Шупашкарти резинăпа техника изделийĕсем кăларакан Чапаев ячĕллĕ заводра ĕç практики илет.

Заводра ĕçлесе те вĕренес ĕмĕт сухатманскер, çулталăкран И. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтне пуçламăш классен вĕренĕвĕн педагогикипе методики факультетне вĕренме кĕрет. Пĕрремĕш кунранах тăрăшса пĕлӳ пухма пуçланă хĕр стипенди илме те тивĕçет. Ку вара уншăн хушма тĕкĕ пулнă. Семестр хыççăн семестр лайăх паллăсемпе вĕçлесе 4 çул сисĕнмесĕрех иртсе каять.

**Чунĕ Муркашах туртнă**

Аслă пĕлӳ илнĕ çамрăк пикешĕн çĕнĕ пурнăç пуçланнă: вăл халĕ – чăн-чăн учитель. Институтра илнĕ пĕлĕве практикăра çирĕплетмелле. «3» паллă пулман дипломлă хĕре Шупашкарта хăварма та пултарнă, анчах ялта çуралса ӳснĕскер, унталлах туртăннă. Çапла вара Апчар хĕрĕ ĕç валеçĕвĕпе Юнкăри вăтам шкула лекет. Çав вăхăтра Ильинкăри вăтам шкулта та пуçламăш классене вĕрентекен васкавраллă кирлĕ пулса тухать те çиччĕ вилсе пăхнă хыççăн пуçлăхсем Надьăна тăван ене ĕçлеме куçараççĕ.

– Халăхра çапла калани пур: ăçта çуралнă – çавăнтах кирлĕ пулнă. Ку калаăша эпĕ хам çинченех калана пулĕ тесе шутлатăп. Тăван енре ĕçлеме пуçларăм та çĕнĕ туссем тупрăм, кунтах çемье çавăртăм, тăвата ача çуратса ӳстертĕм. Çак çула мана Турри хăй пана пулĕ тесе шутлатăп. Çавăнпа та ун тăрăх тикĕс утассине пĕрремĕш кунранах хам пурнăçăн никĕсĕ туса хутăм, – лăпкăн калаçать 40-мĕш вĕренӳ çулĕ пуçланă Надежда Лукинична.

Кунта çитсен эпĕ хамăн пĕлĕшĕмĕн наставник ĕçĕ-хĕлĕ пирки сăмах хускатрăм. Ĕçе чунĕпе парăннă вĕрентекен хăй хыççăн çултан-çул ырă йĕр çеç хăварса пырать. Çапла вара Надежда Лукинична ăс панă яшсемпе хĕрсенчен 20-ĕшĕ ытла хăйсен пурнăçĕнче вĕрентекен çулне суйласа илнĕ. Пурнăçне шкул ĕçне халалланă вĕрентекен тата директор вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе те тăтăш паллашса тăма, вăхăтра кирлĕ сĕнӳсем пама вăхăт тупать.

1984 – 2010 çулсенче пуçламăш классене вĕрентессипе ырă енчен палăрнăскерне директорăн вĕренӳ енĕпе ĕçлекен çумĕ пулма шанаççĕ. 2011 çулта вара ăна шкул ертӳçин тилхепине тыттараççĕ. Йывăрлăхран хăраман хĕрарăм шанчăклăн ертӳçĕ ĕçне кӳлĕнет.

**Професси ӳсĕмĕ**

– Шкула эпĕ ачаллах юратнă. Çавăнпах пулĕ ӳсерехпе маншăн вĕренӳ те ăнса пынă. Çак юрату вĕрентекен ĕçне кӳлĕнсен те чакмарĕ. Ачасене ытларах тата тарăнрах пĕлӳ парасси мана пĕрремĕш урокранах кăсăклантарчĕ. Çапла вара хам туса пынă сăнавсемпе усă курса хамăн тепĕр ĕçтешĕмпе пуçламăш классене вĕрентнĕ чух ĕçлемелли ĕç тетрачĕ хатĕрлерĕмĕр. Çак ĕçе пурнăça кĕртнĕ хыççăн мана «Раççей Федерацийĕн пĕтĕмĕшле вĕренĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ» ят пачĕç, – кăмăллăн калаçать Надежда Лукинична.

Сăмахăмăр професси ӳсĕмĕ çине кĕрсе кайнăран район, Чăваш Республикин Вĕренӳ министерствин Хисеп грамотисем çумне 2020 çулта Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Тав çырăвĕ те хушăннă. Тăрăшуллă директора вĕренӳ ĕçĕнче нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе пысăк ӳсĕм тунăшăн кăçал Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕн Алла Салаевăн Тав çырăвĕпе чысланă. Вĕсене пăхмасăрах шкулта та, ялта та ыттисемшĕн ялан тĕслĕх пулса тăракан вĕрентекен хăйĕн тĕп ӳсĕмĕ тесе шкултан вĕренсе тухса пурнăçра тĕрĕс çул суйласа илнисем тесе шутлать. Вĕсем вара унăн йышлă. Паян нумайăшĕн ачисем, мăнукĕсем Ильинкăри вăтам шкула çӳреççĕ.

**Çемье**

Надежда Лукиничнăпа Николай Геннадьевич Ивановсем 4 ача çуратса ӳстернĕ. Вĕсем пурте Ильинкăри вăтам шкулта ăс пухнă. Пурнăç çулĕ çине тухса аслă пĕлӳ илнĕ. Ашшĕпе амăшне 2 мăнук парнеленĕ.

Ялта ырă тĕслĕх шутланакан ĕçчен мăшăр хăйсен тĕп ĕçĕнче (Николай Геннадьевич – водитель) тăрăшнисĕр пуçне килти хушма хуçалăхра та хастар. Вĕсем маларах çулсенче хăйсен килĕнче 2 ĕне, вăкăрсем тытнă, сыснасем усранă, кайăк-кĕшĕк ĕрчетнĕ. Вĕсен сад-пахчи пуян пулни те вăрттăнлăх мар. Картиш çимĕçне паян та йăлтах хăйсен тăрăшулăхĕпе туса илеççĕ вĕсем.

Йывăрлăх ĕçе парăнать, ĕçрех çамрăклăх упранать. Надежда Лукиничнăпа ирттернĕ тĕл пулура çак чăнлăха тепĕр хут сывăх ăнланса илтĕм. Пурнăç тулли пултăр тесен иртен пуçласа каçчен çичĕ хут тар юхтарса ĕçлемелле. Çавăн чухне çеç юратнă ĕçре те, тăван ялта пурăнакансем хушшинче те, округра-республикăра та, Раççейре те ырă ятлă пулăн. Ăна упраси тата пуян опыта çамрăк ăрăва парса хăварасси – уйрăм сăмах.

**«Педагогсемпе наставниксем – Муркаш çĕрĕн мухтавĕ» проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.**

# Ентешпе мухтанатпăр



Учитель профессийĕн пĕлтерĕшĕ пысăк пулнине кура Раççейре Педагогпа наставник çулталăкĕ пырать. Пирĕн çĕршывра пур професси те пĕр пек кирлĕ. Анчах та ответлăраххисенчен тата сумлăраххисенчен пĕри – учитель профессийĕ. Учитель вĕренекенсемпе пĕрле ачалăх çулĕсене, çамрăклăхра пулать. Çак вăхăта вĕсемпе пĕрле ирттерет, çитĕнӳ тăвать, хăйĕн пĕлĕвне ачасене парать, чун-чĕрин пĕчĕк пайне вĕсен ăшне хывать.

Учительсĕр врач та, инженер та, агроном та, ăсчах та, учитель хăй те пулма пултараймасть. Учитель пуласси – чун туртăмĕ. Альбина Герасимовăра учитель пуласси ăшра хываннă. Альбина Юрьевна Çулав ялĕнче учитель çемйинче çуралса ӳснĕ. Унăн ашшĕ Юрий Николаевич тата амăшĕ Римма Трифоновна – Ершовсен учитель династийĕн пуçаруçисем. Çак вăхăт тĕлне ку династири учительсен пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ 277 çулпа танлашать. Альбина Юрьевнăн ашшĕпе амăшĕ Турай шкулĕнче 40-шер çул ытла ĕçленĕ. Вĕсене иккĕшне те «Халăха çутта кăларас ĕç отличникĕ» паллăпа чысланă. Ершовсем – педагогика ĕçĕн ветеранĕсем.

Юрий Николаевич физика учителĕнче тăрăшрĕ, ĕç стажне 43 çула çитерчĕ. 22 çул хушши спорт радиопеленгаци кружокне ертсе пычĕ. Унăн вĕренекенĕсем çулсерен районпа республика ăмăртăвĕсен чемпионĕсемпе призерĕсем пулса тăчĕç, пĕтĕм Раççей ăмăртăвне хутшăнчĕç. Вĕренекенсем Юрий Николаевича ырăпа аса илеççĕ, уявсемпе саламлаççĕ. Вăл компьютер тапхăрĕ пуçлансан ăна алла малтан илекенсенчен пĕри пулчĕ, çĕнĕ предмет, компьютер урокне вĕрентме тытăнчĕ, çак ăсталăха шкулти ачасемпе учительсене пачĕ.

Римма Трифоновна ачасене математика вĕрентрĕ, ĕç стажне 46 çула çитерчĕ. Яланах тĕрĕслĕхшĕн çунаканскер, ачасенчен çирĕп ыйтатчĕ, вĕсене тарăн пĕлӳ парассишĕн тăрăшатчĕ. Унăн чылай вĕренекенĕ математика учителĕн профессине суйларĕ. 25 çул хушши вăл шкулта завучра тăрăшрĕ, вĕренӳпе воспитани ĕçне йĕркелесе пычĕ. Ăна ачасемпе ашшĕ-амăшĕ, шкулти тата районти учительсем хисеплетчĕç.

Альбина Юрьевна вара мĕн ачаран ашшĕ-амăшĕн ĕçне курса ӳснĕ, вĕсем урока хатĕрленнине, тетрадьсем тĕрĕсленине, уроксем хыççăн ачасемпе кружокра ĕçленине курнă, ачасене воспитани парасси тата шкул ĕçĕ-хĕлĕ пирки калаçнине тăтăшах илтнĕ. Альбина Юрьевна Турай шкулне ылтăн медальпе вĕренсе пĕтернĕ хыççăн ашшĕ-амăш çулĕпе кайса учитель пулма шухăшланă. Вăл И. Яковлев ячĕллĕ педагогика университетĕнчи технологипе экономика факультетне вĕренме кĕнĕ, аслă пĕлĕве хĕрлĕ дипломпа вĕçлерĕ.

1998 çулта Турай шкулĕнче унăн педагогика ĕçĕ пуçланчĕ, вăл ĕç урокĕ тата рынок экономики вĕрентрĕ. Çамрăк учителе ачасем кăмăлласа йышăнчĕç. Альбина Юрьевна хĕр ачасене çĕлеме, çыхма, тĕрлĕ çимĕç хатĕрлеме тата ыттине вĕрентрĕ. Унăн активлăхĕпе ăсталăхĕ палăрса тăчĕ, вăл ачасене район тата республика олимпиадисене, тĕрлĕ конкурса хутшăнма хатĕрлерĕ. Унăн вĕренекенĕсем малти вырăнсене йышăнчĕç.

2001 çулта ăна вĕренӳ ĕçĕнче пысăк çитĕнӳ тунăшăн Раççей Федерацийĕн Вĕренӳ министерствин Хисеп грамотипе чысларĕç. 2006 çулта вăл Раççей Федерацийĕнче чи лайăх учительсен конкурсĕнче çĕнтерӳçĕсен йышне кĕчĕ, укçа хавхалантарăвне тивĕçрĕ. 2010 çулта вара Чăваш Республикинчи лайăх учительсен йышне кĕчĕ. Çав вăхăтра вăл татах та вĕренчĕ, çĕнĕ пĕлӳ илчĕ, яланах çĕнĕ технологи патне ăнтăлчĕ. Кусăмсăр майпа информатика учителĕ пулса тăчĕ.

Пултарулăхĕ пысăк пулнине кура 2016 çулта Альбина Юрьевна Шупашкар хулине ĕçлеме куçрĕ, 4 номерлĕ лицейра информатика предметне вĕрентме тытăнчĕ. Кунта та вăл хăйне пултаруллă учитель шайĕнче кăтартать. Кашни кун урока васканă май вăл учитель ĕçĕ пысăк ответлине туйса тăрать. Учителĕн предмета тĕплĕн пĕлмелле, ачана вĕрентмелле, лайăх кăтартусем тумалла, урокра панă материала класри кашни ачан пĕлмелле.

Класри ачасем вара расна. Альбина Юрьевна кашни ачана туйма, ăна хăйĕн предмечĕпе кăсăклантарма, пурнăçра вăл пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине ăнлантарма тăрăшать. Лицейра вĕренекен ачасем унăн тăрăшулăхне туйса илчĕç, урокра, конкурссемпе олимпиадăсенче лайăх кăтартусемпе савăнтарчĕç. Унăн чылай вĕренекенĕ информатика экзаменĕнче 100 балл илме пултарчĕ. Муниципалитетпа регион конкурсĕсемпе олимпиадисенче çĕнтерӳçĕсемпе призер йышĕнче унăн вĕренекенĕсем яланах пур. Юлашки пилĕк çул хушшинче çĕнтерӳçĕсемпе призерсем 100 ытла.

Ачасене информатикăпа ытларах кăсăклантарас тесе Альбина Герасимова лицейра «3D-моделирование» тата «IT-технология» кружоксем ертсе пыма тытăннă. Çавна май ачасен конкурссемпе олимпиадăсенчи кăтартăвĕсем татах та ӳснĕ. «Молодые профессионалы» регион чемпионатĕнче инженери дизайнĕнче, пĕтĕм Раççейри «3D-фишки», «3D технологи» олимпиадисенче кăтартусем чăннипех те пысăк.

Пултаруллă педагог хулапа республика семинарĕсене активлă хутшăнать, хăйĕн ĕç опытне ĕçтешĕсемпе пайлать, професси ӳсĕмĕ тата интернет пĕрлĕхĕнче калаçу ирттерет. Ăна çулсерен хула, республика, пĕтĕм Раççей мероприятийĕсен эксперт тата судья комисси йышне кĕртеççĕ. Унăн Санкт-Петербургри «Эксперт проекта «Инженеры будущего: 3D технологии в образовании», пĕтĕм Раççейри «3D технологии» олимпиадин пĕтĕм Раççей тата регион шайĕнчи экспер̆чĕ тата ытти статус пур.

Альбина Юрьевнăна ĕçтешĕсем, ачасемпе ашшĕ-амăшĕ хисеплет. Ĕç кăтартăвне кура ăна 2018 çулта Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Хисеп грамотипе чысланă. Тепĕр çулхине вара чи лайăх учительсен конкурсĕнче çĕнтерӳçĕ пулса 200 пин тенкĕ укçа парса хавхалантарчĕç. Унăн чыславĕ татах та чылай. 2019 çулта вăл «Ĕç ветеранĕ» ят илме тивĕçрĕ, 2021 çулта «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ» пулса тăчĕ.

Альбина Юрьевнăшăн учитель професси пурнăçра тĕп вырăн йышăнать. Кашни ир вăл ĕçе хаваспа каять, мĕншĕн тесен ăна унта ачасем кĕтнине пĕлет. Хăй те нумай пĕлессишĕн тăрăшать, ачасене тарăн пĕлӳ парассишĕн тимлет, пысăк çитĕнӳсем патне ăнтăлма яланах хатĕр. Пысăк опытлă педагог вĕренӳ сферинче çӳллĕ шайри специалист пулма тăрăшать. Унăн чи паха енĕ – ачасене тата хăйĕн профессине юратни.

**Ирина ИВАНОВА.**

# Спорта аталантарать



Çын сывлăхĕ уйрăм çынпа пĕрлех обществăшăн та пĕлтерĕшлĕ. Çавăнпа сывă пурнăç йĕркине тытса пыракан 100 çулччен пурăнма пултарассине наука та хирĕçлемест. Ăна пăхăнасси вара шкул çулĕсенче вăй илет. Кунта физкультура учителĕн тӳпи пысăк. Пирĕн паянхи калаçу никĕсĕнче – Шурчари шкул пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта 34 çул ачасене физкультурăпа вĕрентекен Олимпиада Бардасова.

Шупашкар районĕнче çуралса ӳснĕ хĕр Канашри педагогика училищи хыççăн 1989 çулта направленин йĕркипе пирĕн тăрăха ĕçлеме килет. Спортпа туслă физкультура учителĕ 2018 çулта Шурча шкул ачисене мас-рестлинг (патак туртса çĕнтерессипе) вăйăпа туслаштарать. Спортăн çĕнĕ тĕсне ачасем хапăл тусах йышăнаççĕ.

Мас-рестлинг – наци спорчĕн тĕсĕ. Кĕске вăхăтрах Шурчари шкул ачисем республикăри ăмăртусене хутшăнма пуçлаççĕ, республикăн пĕрлештернĕ командине кĕреççĕ. Кунта Олимпиада Виталиевна тĕрлĕ шайри ăмăртусенче ырăпа палăрнă С. Борисова, К. Никифорована, В. Александрована ырăпа палăртрĕ. Вĕсем Чăваш Енрисĕр пуçне Раççейре те палăрнă ĕнтĕ. Паян Шурча шкулĕнче вĕренекен Д. Димитриевăпа К. Иванова та ырă шанчăк параççĕ.

Шкулта спортăн тĕрлĕ тĕсĕ аталаннăран РФ Спорт министерствин Хисеп грамотине тивĕçнĕ вĕрентекен футболла вылясси те анлă сарăлнине палăртрĕ. Кунта вĕреннĕ хыççăн Шупашкарти Олимп резервĕсен училищинче ăсталăх туптанă Н. Антонова маутинбайкпа, У. Андреева ухăран тĕл перессипе спорт мастăрĕн нормативне тултарнă.

**Анатолий БЕЛОВ.**